20-24

## КУПРИН.

# СЛУН

каласа пани, *Соломонов* тунӑ ил̆л̆устратсисемпе.



Издательство Центрального Чувашского Отдела
при Нар. Комиссариате по национальным делам.
Хусан—1920 ҫул.

Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респупликки.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

А. КУПРИН.

# СЛУН

Каласа пани. СОЛОМОНОВ тунӑ иԓԓу-стратсисемпе.

---

(СЛОН-РАССКАЗ С ИЛЛЮСТРАЦИЯМИ СОЛОМОНОВА).

На чувашском языке.

---

Тӗп Ҫӑваш Пайӗ кӑларнӑ.

Издательство Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.
Хусан 1920 ҫул.

# СЛУН.

## I.

Нат̆уш йатлă пĕԇĕк хĕр-аԇа сывă мар пулнă. Кулленех ун патне Михали Петровԇă йатлă тухтăр пырат̆. Хĕр-аԇа ăна тахçанăх паллат̆. Хăш кун çав тухтăр хăйпе пĕрле тата икĕ йут тухтăр йертсе пырат̆. Вĕсем хĕр аԇана ӳппĕн тата месерле çавăрса хураççĕ те, хăлхисене ун ӳԇĕ çумне тытса итлеççĕ, куç тĕкĕсене айалалла туртса пăхаççĕ. Çавăн ԇух вĕсем темле ԇăнласа мăшласа илеççĕ, вĕсен сăнĕсем хайар, хăйсем йут ԇĕлхепе калаçаççĕ.

Унтан аԇа пӳлĕмĕнԇен хăна пӳлĕмне кайаççĕ, унта вĕсене хĕр-аԇан амăшĕ кĕтсе ларат̆. Аслă тухтăрĕ—çӳлĕ, кăвак çӳçлĕскер, ылттăн куçлăхпа—амăшне темĕскер çинԇен тĕлĕ-йĕрĕпе питĕ нумай калат̆. Алăк хупă мар та

хĕр-ачă хăй вырăнĕ çинчен пĕтĕмпех курать те пĕтĕмпех илтет. Вăл нумай ăнланаймасан та, унта хăй çинчен каласнине пĕлет. Амăшĕ тухтăр йенелле пысăк, ывăннă, макăрса хĕрелнĕ, куçĕсемпе пăхать. Тухта кайас чух аслă тухтăрĕ хытă калать:



— Нимрен ытла,—ăна киччемленме ан парăр. Ун пур ĕмĕтне те туса пырăр, тет.

— Ах, тухтăр, вăл ним те йуратмасть-ĕçке!

— Çук, тем ĕнтĕ... сывă мар пулиҫҫен вăл мĕн йуратнине астуса илĕр. Пуканесем... Пĕр-пĕр тутлă йапаласем....

— Çук, çук тухтăр, вăл ним те йуратмаст...

— Ну, ăна мĕнле те пулин хĕпĕртеттерме тăрăшăр.... Ну, ăна мĕнле те пулин... Тўррипе калам сире, есир ăна мĕнле те пулин култарни, савăнтарни, çавă емелтен те ытла пулăшĕ. Ăплаха илĕр-ха, сирĕн хĕрў пурăнăçа йуратманнине сывă мар, урăх нимпе те мар... Сыв пулăр тепре куриҫҫен, тăхлаҫă! тет.

## II.

— Наťуш, ман аҫап хĕрĕм, тет амăшĕ,—сана мĕн те пулин кирлĕ мар-и?

— Çук, аннем, ним те кирлĕ мар,

— Сана кирлĕ-и, епĕ сан пата вырăн çине санăн пур пукаҫусене те лартса тултарам, йураť-и? Епир, пукан, вăрăм пукан, сĕтел тата ҫей таврашсем лартар. Пуканесем ҫей ĕçҫĕр те çантăлăкпа хăйсен аҫисен сывлăхĕсем çинҫен калаçтăр.

— Тав сана, анне... Мана кирлĕ мар... Мана киҫем...

— Йурĕ, хĕрĕм, пуканесем кирлĕ мар. Те чен сан пата Кĕťука йс Йевҫука ҫĕнмелле пулĕ? Есĕ вĕсене питĕ йурататăн—ĕçке.

— Кирлĕ мар, аннем. Ҫăнахах кирлĕ мар. Мана ним те, ним те кирлĕ мар. Мана ытла ҫта киҫем!

— Кирлĕ-и, епĕ сана шкулат пĕремĕкĕ илсе килсе парăп?

Анҫах хĕр-аҫи ним те каламасӑ, те маҫҫа ҫине хăйĕн тапранман, салху куҫĕсемне пăхаӑ. Унăн ним ыратни те, пĕҫертни те ҫук. Анҫах вăл куллен кун усалланса, вăйсăрланса пыраӑ. Уппа кирек-мĕн тусан та, ăна ҫавах, ăна ним те кирлĕ мар. Ҫапла вăл кунĕце, ҫĕрĕпе шăпах хуйхăрса вырӑаӑ. Хăш ҫухне вăл ҫур сахатлăх ҫывăрса кайаӑ те тĕлĕкре ăна темĕскер хăмăрскер, вăрăмскер, киҫемскер, кĕркуппехи ҫăмăр пекскер, курăпаӑ.

Аҫа пӳлĕмĕн алăкĕ хăва пӳлĕмпеле уҫă пулсан, унтан малалла ашшĕ пӳлĕмне, хĕр-аҫа вара ашшĕне кураӑ. Ашшĕ кĕтесрен кĕтессе васкаса утаӑ, хăй ҫине-ҫине ҫĕлĕм туртаӑ. Хăш ҫух вăл аҫа пӳлĕмне килет, вырăн хĕррине лараӑ те, хуллен Наӑуш урисене аҫашлаӑ. Унтан сасартăк тăраӑ те ҫӳреҫе патнелле утаӑ. Вăл, урамалла пăхса, темĕскер шăхăраӑ, анҫах унăн хулĕсем ҫĕтреҫҫĕ. Унтан вăл васкаса пĕр куҫĕ ҫине тутăр хураӑ, тепĕрин ҫине те, вара ҫăн ҫилленнĕ пек, хăй капинетне кайаӑ. Унтан вăл каллех кĕтесрен кĕтессе ҫӳрет, татах ҫаплах ҫĕлĕм туртаӑ, туртаӑ, туртаӑ... Вара капинет тапак тĕтĕмĕпе кăвакланса кайаӑ.

## III.

Пĕр ирхине хĕр-аҫа ытти ҫухнехинҫен лайăхрахăн вăранат. Вăл тĕлĕкре темĕскер курнă, анҫах нийепле те мĕскерне астуса илеймест те, ҫилай тимлесе амăшне куҫран пăхат.

— Сана мĕн те пулсан кирлĕ-и?—тесе ыйтат амăшĕ. Анҫах та хĕр-аҫа сасартăк хăй тĕлĕкне астуса илет те пăшăлтатса вăрттăн калат:

— Анне... Мана слун... Кăтартатни? Анҫах, вуҫ карттин ҫине тупине мар... Йурат-и? тет.

— Ма пулмаст, хĕрĕм, пĕр шарламасăрах йурат.

Амăшĕ капинета кайат те, хĕрĕ слун курасшăн, тесе ашшĕне калат. Ашшĕ ҫавăнтах тумтирпе шĕлепке тăхăнат те тухса кайат. Ҫур сехетрен вăл хаклă ҫипгр выљҫамалли йапала илсе тавăрăнат. Ку пысăк хăмăр слун, вăл хăйех пуҫне сулат тата хӳрине пăтратат; слун ҫинҫе хĕрлĕ йĕнер, йĕнер ҫинҫе ылттăн ҫатăр та унта виҫĕ пĕҫĕк ҫын ларат. Анҫах хĕр-аҫа ҫав пукаҫи ҫине маҫҫапа хӳме ҫине пăхнăпа пĕрех пăхат те ӳркенсе калат:

— Ҫук. Ку унашкалли мар. Манăн ҫăн-ҫăн, ҫĕрĕ слун курас килет, ку ҫунсăр, тет.

— Есĕ пăх-ха, Натуш,—тет ашшĕ.—Епир йăна акă тапратса йарăпăр та, вара вăл ҫĕрĕ слун пекех утса ҫӳрĕ.

Слуна уҫăпа ҫавăрса тапратса йараҫҫĕ те вăл пуҫне сулса тата хӳрине пăтратса, урисене илсе пусма тапратат,

хуллен сётел тăрăх утса кайат. Хĕр аҫа кăна курса та хĕпĕртемест, тата ăна ку киҫемрех те, анҫах та ашшĕне ҫилентерес мар тесе, вăл шăппăн калат:

— Атте, епĕ сана ҫакăншăн питĕ шутсăр тав тăватăп. Епĕ, кун пек килĕшӳллĕ пукаҫи никамăн та ҫук пулĕ, тесе шухăшлатăп... Анҫах... астăватăн-и... есĕ тахҫанах мана тискер кайăксем патне ҫăн-ҫăн слуна курма илсе кайас тесеттĕн-ҫҫĕ... ҫавах есĕ мана пĕрре те илсе каймарăн-ĕҫке... тет.

—Ах, итле-ха, пĕҫĕк хĕрĕм, хăвах шухăшла, йепле епир ăна тăвăпăр. Слун, вăл питĕ пысăккă, маҫҫа ҫулĕш, вăл пирĕн пӳлĕмеенҫе вырнаҫаймаст... Ахаљ те унашкал слуна манăн ăҫтан тупас?

— Атте, мана унашкал пысăкки кирлĕ мар... Мана пĕҫĕккине илсе килсе кăтартсан та йурат, хăйĕ ҫĕрĕ пултăр. Ак ҫакăн йышшине те пулин... Слун ҫурине те пулсан тупса кил.

— Йуратнă хĕрĕм, епĕ саншăн тем те тăвăттăм, анҫах ҫакна тума пултараймастăп. Есĕ мана: атте, мана пĕлĕт ҫинҫен хĕвел илсе пар, тенĕ пекех ҫак сăмахсем.

Хĕр аҫа хуйхăллă йăллатат.

— Мĕнле есĕ ухмах, атте. Хĕвел пĕҫерет, ăна нимле ҫуккине епĕ пĕлетĕп. Уйăха та ҫавах. Ман умра слун ҫури пултăр-ҫҫĕ... ҫăчни.

Вара вăл куçĕсене хупать те шăппăн:

Епĕ ывăнтăм... Ан йатла мана, атте... тет.

Ашшĕ хăйне çÿçрен йарса илет те капинета ҫупса тарать. Унта вăл пĕр тапхăр кĕтесрен кĕтессе утса çÿрет. Унтан вăл хăпăл-хапăл урайне туртса пĕтмен перускине пăрахать те (çавăнтăн ăна йаланах хĕр-аҫа амăшĕнҫен çĕкленет) пÿлĕм тарçине кăшкăрать:

— Уҫкка! Паҫттăпа шĕлепке пар! тет.

Малти пÿлĕме арамĕ тухать.

— Есĕ ăçта кайан, Ĕлексантăр?—тесе ыйтать вăл.

Ашшĕ паҫттă тÿмелисене тумелет, хăй йывăррăн сывлать.

— Епĕ хам та, Марйе, ăçта кайассине пĕлместĕп... Пайан каçалапа ҫăнах та кунта, хамăр пата, ҫăн слунах илсе килсе пули мĕн, тетĕп.

Арăмĕ ун çине тĕлĕнсе, хăраса пăхать.

— Ара есĕ, Ĕлексантăр сывă-и? Санăн пуç ыратмасть-и? Тен есĕ, куç хупмасăрах çĕр каçрăн пулĕ?

— Епĕ пĕртте çывăрмарăм,—тет çиленсе упăшки. Епĕ, есĕ ухмаха йертĕн-и мĕн? тесе ыйтасшăнне сисетĕп; епĕ ухмахах йермен-ха. Сыв пул. Тепре куриҫҫен. Каçпа мĕн пулĕ.

## IV.

Ик сехетрен Ĕлексантăр, Натушăн ашшĕ, тискер кайăксем кăтартакан çĕрте, малти еретре ларать те, вĕрентнĕ

тискер кайăксем, хуçи хуш̆нипе, тем тĕрлĕ хăтланнине пăхса лараĭ. Тăнлă йытăсем сикеççĕ, хуп-хупăлҫăкланаççĕ, çемйипе ташлаççĕ, йурлаççĕ, пысăк, картун сасă-паллисемпе сăмахсем хушаççĕ. Упăтесем-хăшĕ хĕрлĕ сарапансемпе хăшĕ кĭвак йĕмсемпе-канат тăрăх утаççĕ, тата пысăк йытă çине утланса çÿреççĕ. Пысăк хĕрлĕ арăслансем хĕртнĕ кăшăлсем виттĕр сикеççĕ. Лăпсăркка тÿлеп (пулă) пустулет перет. Йулашкинҫен слунсене кăларса тăрататаççĕ. Вĕсем виççĕн, пĕри пысăккă, иккĕш пĕҫĕкçĕ, çавах вĕсен кĕлеткисем утрап ҫылай пысăккă. Çав пысăк ыыҫăхсем, хăйсем пăхма темле лăпсăркка тата йывăр пулсан та, ҫăн йывăр йапаласене тăваççĕ, апла хытланма темле çивĕҫĕ çын та пултарас çук, çакна пăхса ытла тĕлĕнмелле. Пуринҫен ытла ҫăн пысăк слун савăк хытланаĭ. Вăл малтан кайри урисем çине тăраĭ, лараĭ, пуçĕ çине тăраĭ, урисене çÿлелле туса, йывăç кĕленҫесем çинҫе утаĭ, кусса кайакан пиҫке çинҫе утаĭ, сăмсипе пысăк картун кĕнеке листисене çавăрса хунаĭ, вара, йулашкинҫен, саппун çакса сĕтел хушшине кĕрсе ларать те ырă аҫапа пĕрех апат çийет.

Кăтартса пĕтереççĕ. Куракансем саланаççĕ. Натÿш ашшĕ таҫка, хулăм нимĕҫĕ, çав тискер кăйăксен хуçи патне пыраĭ. Хуçи хăма карта хыçĕнҫе тăрса пысăк хура ҫĕлĕм туртаĭ.

— Каçарăр, тархасшăн,—тет Натÿш ашшĕ.—Есир

хăвăрăн слунна ман пата вăхăтлăх киле илеех пыма пултараймастăр-и?

Нимĕҫĕ тĕлĕннипе куҫне ҫарса пăрахат, тутине сарса йарат, ҫавăнпа унăн ҫĕлĕмĕ ҫĕре вĕҫерĕнсе укет. Вăл мекĕрленсе пĕшкĕнет те ҫĕлĕмне илет, ăна каллех ҫăвара хыпат, вара тин калаҫма пуҫлат:

— Киле илсе пыма? Слунпа? Епĕ сирĕн сăмаха ăнланаймастăп, тет.

Нимĕҫĕ куҫĕсенҫен, вăл та Натуш ашшĕн пуҫ ыратмаст-и, тесе ыйтасшăн пек, туйăнат... Анҫах Натуш ашшĕ васкаса хăй сăмахне ăнлантарат: унăн пĕртен пĕр хĕрĕ, Натуш, темле тĕлĕнмелле ҫирпе ҫирлет, ҫав ҫире тухтăрсем те тĕпĕ—йĕрĕпех пĕлеймеҫҫĕ. Хĕрĕ ĕнтĕ вырăн ҫинҫе уйăх выртат, наҫарланат, кунтан-кунах вăйсăрланат, ăна ним те килĕшмест, киҫемлет те вăрахăн пĕтсе пырат.

Тухтăрсĕм ăна савăнтарма калаҫҫĕ, анҫах ăна ним те килĕшуллĕ мар, унăн пур ĕмĕтне те туса пыма калаҫҫĕ, анҫах тата вăл ниме те ĕненмест. Пайан вăл ҫĕр слун курасшăн пулҫĕ. Ҫăнах та ăна тума пулмаст пулĕ-ши?

Тата вăл тумтир тумелисенҫен тытса ҫĕтĕрекен сассипе нимĕҫе калат:

— Акă, ĕнтĕ... Епĕ, сăмахсăрах, вара ман хĕрĕм сывалассипе ĕненетĕп. Ну... турă ҫăлах... сасартăк ун ҫирĕ йывăрланĕ... Сасартăк хĕр-аҫа вилсе кайсан? Шу-

хăшласа пăхăр-ха: ман пĕтĕм пурнăçăмра çав шухăш, епĕ ун йулашки ĕмĕтне, ҫăн йулашки ĕмĕтне туманни манăн йывăр.

Нимĕҫĕ хăмăрланаť те шухăша кайса каҫа пӳрнипе сулахай куç харшине хыçаť. Йулашкинҫен вăл ыйтаť:

— Ех-хĕм... Сан хĕрӳ миçе çулта? тет.

— Улттăра.

— Мм... Ман Лисук та ултă çулта. Ех-хĕм... Анҫах пĕлеттĕр-и, вăл сире хакла ӳкет. Слуна çĕрле илсе пырас пулаť те тепĕр каçĕнҫе тин кайалла илсе килес пулаť. Кăнтăрла йурамасť. Халăх пухăнаť те пĕр пăлхав анҫах пулаť... Çапла пулаť, епĕ пĕр кун çухататăп, сирĕн мана çав сийене тӳлес пулаť.

— Ара тулемесĕр, сăмахсăрах... уншăн ан вăрханăр...

— Тата—политса пĕр слуна уйрăм çурта кӳртме ҫармĕ-ши?

— Епĕ ăна хамах йӳнеçтерĕп, ҫарас çук.

— Тата тепĕр сăмах: сирĕн пӳрт хуçи хăй пӳртне пĕр слун кӳртме ҫармĕ-ши?

— Ҫарас çук. Епĕ хам пӳрт хуçи.

— Акă! Ку апла аван-ха. Унтан татах ыйтам: есир хăш хутĕнҫе пурăнатăр?

— Иккĕмĕшĕнҫе.

— Ăмм... Ку ĕнтĕ ытла лайăхах мар... Сирĕн пӳртпе сарлака пусма, çӳлĕ маҫа. пысăк пӳлĕм, сарлака алăксем

тата питĕ ҫирĕп урай пур-и? Ман слун Томми, ҫӳлĕшĕ виҫĕ аршăн та тăватă вершук, тăрăшшĕ пилĕк аршăн та ҫурă. Унсăр пуҫне вăл тата 112 пăт туртать.

Наҫуш ашшĕ минутлăх шухăша кайать.

— Епир мĕн тăвар?—тет вăл —Халĕ мĕн пăта кайăпăр та пурне те патĕнҫе пăхăпăр. Кирлĕ пулсан, епĕ хӳмисем хушшине сăрма хупăп.

— Питĕ аван!—тесе килĕштерет тискер кайăксен хуҫи.

V.

Ҫĕрле слуна сывă мар хĕр-ăҫа патне хăнана илсе кайаҫҫĕ.

Шурă ҫитĕпе витнĕскер вăл тăнлăса уррам варрипе утать, пуҫне сулкалать, тата сăмсине пĕре кукăртать, пĕрре тӳрлетет. Ҫĕрле пулин те унпа пĕрле халăх нумай пырать. Слунĕ халăх ҫине пĕр те пăхмасть: вăл тискер кайăксем антытнă ҫĕрте кулленех темиҫе ҫĕр ҫын курнă. Пĕрре анҫах вăл кăшт ҫиленнĕ.

Темле пĕр урамри аҫа ун ури айнех ҫупса пынă та хăлăха ахăртма хуҫкаланса авкаланма тапратнă.

Вăра слун лăппăн ун шĕлепкине хывса илнĕ те йунашар пăталлă карта урлă ывăтнă.

Хулаҫă (городовой) халăх хушшинҫе пырать те халăха укĕтлесе калать:

— Хура хăлăх, салансамăр. Мĕскер пухăнмалли тупрăр? Шатах тĕлĕнетĕп! Нихăçан та урамра ҫĕрĕ слун курман пек хытланаттăр! тет.

Пӳрт патне ҫитеççĕ. Пусма ҫинҫе слунăн ытти ҫулĕ ҫинҫи пек, апат ҫимелли пӳлĕме ҫитиҫҫенех, пур алăксем те уҫă тăраççĕ, ҫапла тума алăк хирсисене мулатукпа ҫапса уйăрмалла пулнă. Ҫакăнашкал пĕрре пӳрте пысăк хăватлă турăшă илсе кӳртнĕ ҫух тунă мĕн.

Пусма вĕҫне ҫитсен слун тем кансĕрленсе ҫарăнса, хирĕçсе тăрат.

— Ăна пĕр-пĕр астармалли апат парас пулат... тет нимĕҫĕ.—Тутлă нулкă, йе мĕн те пулин... Ну... Томми... ăх-ăх.. Томми!...

Натуш ашшĕ урам урлă кулаç лапкине ҫупат те ҫаврака, пысăк тутлă кулаҫа илсе ырат. Слун ăна картун курупки мĕнĕпе хыпса йăрасшăн, анҫах нимĕҫĕ тăват пайран пĕрне апҫах парат. Томмина кулаҫă шăл ҫем ми туйăнат те вăл иккĕмĕш татăкне тытса сăмсине ҫăсат. Нимĕҫи ҫейе. Вăл аллине астармалăх кулаҫа тытса пĕр карт ҫинҫен тепĕр карт ҫине хăпарса пырат те, слун, сăмсине ҫăсса, хăлхисене сарса нăрахса, ирĕксĕрех ун хыççăн хăпарат. Хăпарса ҫитсен, нимĕҫе иккĕмĕш татăкне парат.

Ҫапла майпа ăна апат ҫимелли пӳлĕме илсе кӳртеççĕ,

унти пукан-сӗтелсене малтанах кӑларса хунӑ, урайне пайтах улӑм тӑкнӑ... Слуна уринҫен урайкэ ҫапса лартнӑ пӑтаран кӑкараҫҫӗ. Ун умне ҫӗр кишӗр, купӑста, тата ҫарӑк тӑкса пзраҫҫӗ. Нимӗҫӗ патнех ҍӑрӑм ҫемҫе пукан ҫине вырӑнаҫаҭ. Хӑй сӳнтереҫҫӗ те пурте ҫывӑрма вырҭаҫҫӗ.

## VI.

Тепӗр кунне хӗр-аҫа кӑвак ҫутӑллах тӑраҭ те пуринҫен малтан ыйтаҭ:

— Слун мӗнле? Вӑл килҫӗ-и? тет.

— Килҫӗ, тет хирӗҫ амӑшӗ,-анҫах вӑл, малтан Наҭуш питне ҫутӑр, унтан калакла ҫӑмарта ҫиое йатӑр тата вӗретпӗ сӗт ӗҫтӗр терӗ.

— Вӑл куҫӑ-и?

— Вӑл куҫӑ. Ҫикеле, хӗрӗм. Акӑ епир ун патне кайӑпӑр.

— Вӑл кулӑшла-и?

— Кӑштах пур. Ӑшӑ кӧпӳне тӑхӑнса йар.

Ҫӑмартине васкасах ҫинӗ, сӗтне ӗҫнӗ. Наҭуша, пӗҫӗккӗ, утма пӗлмен ҫух ҫӳренӗ, урапа ҫине лартаҫҫӗ те апат ҫимелли пӳлӗме илсе кайаҫҫӗ.

Наҭӳш карттин ҫине пӑхса шухӑшланинҫен, слун тата пысӑкрах пулнӑ.

Унӑн тирӗ кушаланҫак, пысӑк хутламлӑ. Урисем, тункката пек, хулӑм. Вӑрӑм хӳри вӗҫӗпҫе темӗскер милке пекскер пулнӑ. Пуҫӗ пӗтӗмпех мӑн шӑҫмаклӑ. Хупах пек пысӑк хӑлхисем айалалла усӑннӑ. Куҫӗсем ытла та пӗҫӗккӗ, анҫах тӑнлӑ та куҫӑ. Авсав шӑлӗсене касса янӑ. Сӑмси—вӑрӑм ҫӗлен пекех те; вӗҫӗнҫе икӗ сӑмса шӑтӑкӗ, вӗсем хушшинҫе хускапакан, авӑнакан пӳрне. Слун сӑмсине тӑршшӗпех ҫӑсса йарсан, ҫӳреҫене ҫитерет пулӗ.

Хӗр-аҫа пӗртте хӑраман. Вӑл ҫав ылҫӑх ытла та пысӑккинҫен тӗлӗнсе кайнӑ ҫеҫ. Анҫах аҫа пӑхакан хӗр, вун-ултӑ ҫулти Пӑлаки, хӑранипе кӑшкӑрма тытӑнат.

Слун хуҫи, нимӗҫ, пӗҫӗк урапа патне пырат те:

— Ырӑ ир пултӑр, хӗрӗм. Тархасшӑн ан хӑрӑр. Томми питӗ куҫӑ, вӑл аҫасене йуратат, тет.

Хӗр-аҫа нимӗҫе хӑйӗн пӗҫӗк шурӑ аллине ҫӑсса парат.

— Сывӑ-и, мӗнле есир пурӑнатӑр? тет хирӗҫ вӑл.—

— Епӗ пӗртте, пӗр тумлам та хӑрамастӑп. Вӑл мӗн йатлӑ?

— Томми.

— Сывӑ-и есир, Томми,—тет те хӗр-аҫа пуҫне таиат. Слун ҫапла пысӑккине кура, вӑл ӑна „есӗ" (ты) тесе калама шикленет.—Есир ку ҫӗре мӗнле ирттертӗр?

Вăл слуна та аллине ҫăсса парат̆. Слун аллине сыхланса илет те унăн ҫипҫе пӳрнисене хăйĕн хусканакан— авăнакан пӳрнипе пăҫăртат̆, вал ҫакна, тухтăр Михаил Петроҫтăран та, ҫемҫенĕн тăват̆. Ҫакăн ҫух слун пуҫне сулкалат̆, тата унăн пĕҫĕк куҫĕсем, кулнă пек, пĕтĕмпех хĕсĕнсе ларăҫҫĕ.

— Вăл пурне те ăнланат̆-ĕҫке?—тесе ыйтат̆ хĕр-аҫа нимĕҫрен.

— Уу, йăлтах ăнланат̆ хĕрĕм!

— Каласма анҫах пĕлмест вăл?

— Ара, каласма анҫах пĕлмест ҫав. Манăн та килте, сирĕн пек пĕҫĕк, хĕр-аҫа пур. Вăл Лисук йатлă. Томмипа вĕсем ытла та лайăх килĕштереҫҫĕ.

— Есир, Томми, ĕнтĕ ҫей ĕҫнĕ пулмалла? тесе ыйтат̆ хĕр-аҫа. Слун татах сăмсине ҫăсат̆ те хĕр-аҫана нитĕнҫек вăйлă, ăшă сывлăшпа вĕрет; ҫăвăнпа хĕр-аҫа пуҫĕ ҫинҫи ҫăмăл ҫӳҫсем пур йенелле те вĕҫсе саланса кайаҫҫĕ.

Натуш ахăлтатат̆ те аллипе ҫупат̆. Нимĕҫĕ мăн сасăна кулат̆. Вăл хăй те, слун пекех, пысăккă, нӳҫĕке, тата ырă ҫунлă та, Натӳша вĕсем иккĕшĕ те пĕрешкел пек туйăнат̆. Тен вĕсем пĕр тăван тен?

— Ҫук, вăл ҫей ĕҫмест, хĕрĕм. Анҫах та вăл сахăр шывне килленсех ĕҫет, тата вăл пулккă питĕ йуратат̆.

Пĕр путпус тулли пулккă илсе пыраҫҫĕ. Хĕр-аҫа

слуна хӑналантарать. Слун хӑвӑртрах пулкка хӑй пӳрнипе ҫавӑрса илет те сӑмсипе вӑр-ҫавракa ҫавӑрса ӑна таҫта пуҫӗ айне ҫикет, унта унӑн айалти кулӑшла, виҫ кӗтеслӗ лемсеркке тути хусканса тӑрать. Пулкка гипӗ тир ҫумӗнҫе кӑшӑртатни илтӗнет. Томми тепӗр пулккине те, виҫҫӗмӗшне те, тӑваттӑмӑшне те, пиллӗкӗмӗшне те пуҫтарса ҫикет те, тав тунине кӑтартма, пуҫне сулать, вара унӑн пӗҫӗк куҫӗсем килленнипе тата хытӑрах хӗсӗнсе ларассӗ. Хӗрaҫa савӑклӑ ахӑлтатать.

Пур пулккине те ҫисе йарсан, Натуш слуна хӑйӗн пуканисемпе паллаштарать:

— Пӑхӑр-ха, Томми, акӑ ку капӑр тумланнӑ пукани, — вӑл Саҫук йатлӑ. Вӑл питӗ лайӑх аҫа, анҫах кӑшт капӑра ӑмсанать те шӳрпе ҫийесшӗн мар. Акӑ ку—Натук—Саҫукӑн хӗрӗ. Вӑл ӗнтӗ хута вӗренме пуҫларӗ те, пур сас паллисене те пӗлет. Акӑ ку Матук. Ку манӑн ҫӑн лайӑх пукане. Куратӑр-и, унӑн сӑмси ҫук, тата пуҫне те ҫыпӑҫтарса анҫах лартнӑ, тата ҫӳҫӗ те питех ҫук. Ҫавах та килтен карҫӑка хуса кӑларса йама йурамаст-ӗҫке. Ҫапла-и, Томми? Вӑл ӗлӗк Саҫукӑн ӑмашӗҫҫӗ, халӗ пирӗн патӑрта апат пӗҫерсе пурӑнать. Ну, атӑр выҫҫӑпӑр, Томми: есир ашшӗ пулӑр, епӗ амӑшӗ пулам, кусем тата пирӗн аҫамӑрсем пулҫҫӑр.

Томми килӗштерет. Вӑл кулать, Матука мӑйӗнҫен ты-

тать те хăй çăварнелле туртать. Анчах ку мыскара туни анчах. Пукаҫине кăшт чăмлакаласан, вăл ăна каллех хĕрача çĕр çине хурать, чăнах, кăшт йĕпетсе лăчăркана.



Унтан Натуш ăна пысăк карттинлă кĕнеке кăтартать те каласа ăнлантарать:

— Ку ут, ку сар-кайăк, ку пăпăл... Акă читлĕхре

кайӑк, акӑ витре, тӗкӗр, кӑмака, кӗреҫе, ула курак... Акӑ ку, акӑ, пӑхӑр-ха, ку слун! Ҫӑнах, пӗртте ҫывӑха ҫымаст? Ҫавӑн пек пӗҫӗк слун пулать-и, Томми?

Томми, ҫавӑн пек пӗҫӗк слунсем ҫут ҫанталӑкра нихӑҫан та пулмаҫҫӗ, тесе килӗштерет. Ахаҫ, ӑна ку картин килӗшмест. Вӑл пӳрнипе листӑка тытать те, ҫавӑрса хурать.

Кӑнтӑрлахи апат ҫимелли вӑхӑт ҫитет, анҫах хӗр-аҫана нийепле те слунран уйӑрмалли ҫук, ҫавах та нимӗҫӗ нумайах шухӑшласа тӑмаст.

— Ан тивӗр, епӗ хамах йӳнеҫтерӗп. Вӗсем апат пӗрле ҫийӗҫ.

Вӑл слуна ларма хушать. Слун итлет те ларать, вара пулӗмӗнҫи пӗтӗм урай кисренет, шкапри йапаласем ҫӗтреҫҫӗ, айалта пурӑнакансен маҫҫаран штукатуркӑ хайпӑнса тӑкӑнать. Слуна хирӗҫ хӗр-аҫа вырӑнаҫса ларать. Вӗсем хушшине сӗтел лартаҫҫӗ. Слун майӗнҫен ҫитти ҫыхса йараҫҫӗ, вара икӗ ҫӗнӗ йулташ апат ҫиме тапратаҫҫӗ. Хӗр-аҫа ҫахӑ ашӗ шӳрпипе котлет ҫийет, слун тӗрлӗ пахҫа ҫимӗҫ, тата салат. Хӗр-аҫана пӗҫӗк стаканпа „херес" ерехӗ параҫҫӗ, слуна пӗр стаккан ромпа ӑшӑ шыв; вара вӑл киллепсех плашкаран ҫавна сӑмсипе туртать. Унтан вӗсепе тутлине параҫҫӗ-хӗр аҫана пӗр ҫашкӑ какао, слуна ҫур кулаҫӑ параҫҫӗ. Нимӗҫӗ ҫак вӑхӑтра ашшӗне хӑна пӳлӗмӗнҫе, слун пекех йуратса, сӑра ӗҫсе ларать.

Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн темӗнле ашшӗн палланисем пыраҫҫӗ, вӗсене малти пӳлӗмре ан хӑраҫҫӑр тесе, слун ҫинҫен калаҫҫӗ. Малтан вӗсем ӗненмеҫҫӗ, кайран, Томмина курсан алӑк ҫумнелле лапҫӑнаҫҫӗ.

— Ан хӑрӑр, вӑл кунҫӑ, тесе лӑплантарат вӗсене хӗр-аҫа.

Анҫах пынӑ ҫынсем васкаса хӑна пӳлӗмне кӗрсе кайаҫҫӗ те пӗр пилӗк минут та лармасӑр тухса тараҫҫӗ.

Каҫ пулат. Ҫылай пулнӑ. Хӗр-аҫанӑн ҫывӑрма та вӑхӑт ҫитнӗ. Ҫавах ӑна нийепле те слун патӗнҫен илсе каймалли ҫук. Вӑл ҫаплипех слун патӗнҫе ҫывӑрса кайат те, ӑна вара ҫывӑраканскере аҫа пӳлӗмне урапипе туртса кайаҫҫӗ. Вӑл хӑйне салантарнине те сисмест.

Ҫав каҫ Натуш тӗлӗк курнӑ, вӑл Томмина каҫҫа кайнӑ пек; вӗсен аҫи-пӑҫисем, пӗҫӗк, савӑк слун ҫурисем нумай пек. Ҫӗрле тискер кайӑксем усранӑ ҫӗре илсе кайнӑ слун та тӗлӗкре ҫипер, кӑмӑллӑ хӗр-аҫана курат. Унсӑр пуҫне ӑна тата пысӑк кулаҫӑсем, мӑйӑртан тата схисташкӑран тупӑскер сем, хапха пысӑкӑш курӑнаҫҫӗ...

Ирпе хӗр-аҫа тӗреклӗ, вӑйлӑ вӑранат те, ӗлӗк ҫывӑ ҫунехи пек, хыттӑн васкаса, пӗтӗм пӳртре илтӗнмеллех кӑшкӑрат:

— Сӗ-ӗт! Кирлӗ! тет.

Ҫав сасса илтсен, амӑшӗ хӗпӗртесе ҫывӑрмалли пӳлӗмӗнҫе кӗл-тӑват.

Анҫах хӗр-аҫа унтах ӗнерхи ҫинҫен астуса илет те ыйтать.

— Слун тата ăҫта? тет.

Ăна: слун киле кайрӗ, унăн атисем пур, вӗсене амăшсӗр хăварма йурамасть, вăл Натуша салам каларӗ, тата



вăл ăна хăй патне сывалсан, хăнана кӗтет, тесе лăплантараҫҫӗ.

Хӗр-аҫа ҫейенӗн йăллатса илет те калать:

— Томмина калăр,—епӗ халӗ пӗтӗмпех сывалса ҫитрӗм! тет.

# ТĔП ҪАВАШ ПАИЙĔ КАЛАРНА КĔНЕКЕСЕМ.

Акиттатсипе политиккăлла кĕнекесем.

1. Коммунистсен III Инттернатсионалĕ пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем патне йанă манихвест.

2. Йупа уйăхĕнҫи револҫутси халăха мĕн паҫĕ?

3. Пирĕн йалав.

4. Хĕрлĕ ҫăлтăр.

5. **Л. Тротский.**—Выҫлăхпа кĕрешер!

6. **А. Арну.**—Коммунăн виллисем.

7. **Е. Йарославский.**—Авкуст Пепĕл.

8. **Ҫикколини.**—Нимĕҫ вăрҫи пуҫланни, вăрҫăн айăплă ҫынĕсем.

9. **Кершентсев.**—Акăлҫансем хăйсен ҫĕрĕнҫи хресҫенсене мĕнле хĕсĕрлеҫҫĕ.

10. **Е. Йарославский.** — Карл Маркспа Хритрих Енкĕле.

11. **Ваттин.**—Мĕн вăл коммунă?

12. **Лилина.**—Револҫутси халăха мĕн паҫĕ?

13. **Ҫиновйев.**—Хресҫенсем патне йанă

**çыру**. Йалсене тырăсем пухса çŭрекен отретсене мĕншĕн йараççĕ?

14. Вăтам хресчененĕн çыравĕ тата Ленинпа Тротский йулташсем ăна хирĕç калани.

15. **Пуххарин.**—Коммунистсен (польшевиксен) прокрамми.

16. Парттире тăракан паллă çынсен пухăвĕнче йулташ **Ленин** каланă сăмахсем.

17. Канашсен ирĕкĕ (вопрăсла-ответлă кĕнеке).

18. Кашни хресченĕн мĕн пĕлсе тăмалла?

19. **Шлихтер**.—Револютси вăрçийĕ, мĕнле вăл пуçланса кайнă, хăçан вăл пĕтмелле.

20. **Иванов.**—Парттипе орканисатсилĕр!

21. Ленин йулташăн Колчака çĕнтерпĕ пирки ĕçлекенсемпе хресченсем патне йанă çыру.

22. Мĕншĕн епир вăрçатпăр?

23. Раççей Коммунисчĕсен (польшевиксен) парттин прокрамми. 1919-мĕш çулти пушăн 18—23 кунĕсенче парттин 8-мĕш сиесчĕ йышăннă.

24. **Н. Оççински**. Канаш респупликкипе темократти респупликки.

**25. Кий.**—Канашсен респупликки.

**26.** Çĕре сотсиалисăм йĕркипе валеçсе сотсиалисăм йĕркипе ĕçлесси çинчен кăларнă саккун.

Казань, 3-я Государственная Типография, 1920 г.